Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

21 (7875) № ✻ *Шăмат кун, 2011 çулхи пуш (март) уйăхĕн 26-мĕшĕ* ✻ *Хакĕ ирĕклĕ*

**Райадминистрацире**

## Çулсем хупăнаççĕ

Раççейри автомобиль çулĕсем тата çул-йĕр хуçалăхĕ çинчен калакан федераллă саккунăн 30-мĕш статйипе тата ЧР Министрсен Кабинечĕн пуш уйăхĕн 9-мĕшĕнчи 67-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче 236 номерлĕ йышăну кăларчĕ. Унта ака уйăхĕн 11-мĕшĕнчен тытăнса çу уйăхĕн 10-мĕшĕччен район территорийĕнчи вырăнти пĕлтерĕшлĕ пĕрле усă куракан автоçулсем çинче йывăр виçеллĕ автомобильсем çӳрессине вăхăтлăх чарасси пирки каланă.

Çавăнпа та çул хупиччен предприяти-организаци ертӳçисен автотранспортпа туллин усă курса юлма тăрăшмалла.

**Хамăр инф.**

**Аса илтеретпĕр**

## «Çуллахи вăхăт» çине куçатпăр

**Мартăн 27-мĕшĕнче** сехет йĕпписене пĕр сехет малалла куçарса эпир «çуллахи вăхăт» çине куçатпăр. Кĕркуннепе вара «хĕллехи вăхăт» çине таврăнмăпăр. Сехет йĕпписене малалла çур çĕр иртни икĕ сехетре куçармалла.

**Пĕлӳ тĕнчинче**

## Хастар педагог



*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Роза Валериановна Малакова – районти хастар вĕрентекенсенчен пĕри. Вăл Юнкăри вăтам шкулта математика предмечĕпе пĕлӳ парать. Пысăк ăсталăхлă учитель чун туртнă ĕçре 31 çул вăй хурать. Роза Валериановна кашни вĕренекене хăй ачи вырăнне хурса йышăнать, çавăнпах та пулĕ вĕсем ун патнелле туртăнаççĕ, унтан тĕрлĕ канаш-сĕнӳ ыйтаççĕ.*

*– Класри кирек хăш ача та маншăн пĕр тан. Эпĕ вĕсене нихăçан та лайăххи, япăххи çине уйăрмастăп, – тет Роза Валериановна.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Çур акине хатĕрленетпĕр**

## Топливо мĕн чухлĕ пур?

Юр вĕçтерме чарăнмасть пулин те хĕвел кунран кун çӳлерех хăпарать. Умра – ака уйăхĕ. Сисмĕпĕр те – çур акнине тухма вăхăт çитĕ. Хресченĕн çак ответлă тапхăрне районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем тивĕçлипе хатĕрленеççĕ-и? Çак ыйту çине хурав шыраса ял хуçалăх производство кооперативĕсенче пуш уйăхĕн 15-мĕшĕ тĕлне сĕрмелли-çунтармалли материалсемпе лару-тăру мĕнле пулнипе паллашас терĕмĕр.

Çур акине вăхăтра тата пахалăхлă ирттерес ĕçре сĕрмелли-çунтармалли материалсен çителĕклĕхĕ иккĕмĕш вырăнта мар. Кăçалхи çур акине тухăçлă ирттерме районти хуçалăхсене пурĕ 454 тонна дизель çăвĕ, 130 тонна А-76 маркăллă бензин кирлĕ. Хуçалăхсем район администрацийĕн ял хуçалăх пайне тăратнă оперативлă кăтартусемпе асăннă кун тĕлне сĕрмелли-çунтармалли материалсемпе пĕтĕмĕшле ӳкерчĕк çакнашкал. Хуçалăхсенче пурĕ 100,1 тонна (22 процент) дизель çăвĕ тата 37,3 тонна (28,7 процент) бензин пур.

**А. ПЕТРОВ.**

**Налук службинче**

## Декларацисем тăратаççĕ

Чăваш Республикин Федераллă налук службин районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ инспекцийĕ малтанлăха палăртнă тăрăх пуш уйăхĕн 23-мĕшĕ тĕлне граждансем 1270 деклараци тăратнă. Ку вăл иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 1,5 хут нумайрах. Пĕтĕм йышран 6 проценчĕ – индивидуаллă предпринимательсем. Социаллă пулăшу илес тĕллевпе деклараци тăратнисенчен 27 проценчĕ – вĕреннĕшĕн, 8 проценчĕ – сывалнăшăн. Пурлăх пулăшăвĕ илес тĕллевпе деклараци тăратнисенчен 23 проценчĕ – хваттерпе пурăнмалли çурт туяннăшăн, 36 проценчĕ – пурлăх сутнăшăн.

2010 çулта илнĕ тупăшсемшĕн деклараци тăратас вăхăт ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче тухать. Канмалли тата уяв кунĕсене шутласан деклараци тăратмалли юлашки кун çу уйăхĕн 3-мĕшĕ.

**Л. МИХАЙЛОВА,**
**районсем хушшинчи 6-мĕш номерлĕ налук инспекцийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

**Хаксем**

## Ăçта йӳнĕрех?

**Районта вырнаçнă суту-илӳ точкисенче (лавкка тата пасар) пуш уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç таварĕсен хакĕсене танлаштарса кăтартни.**

**Колонкăсенче: 1. Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсем. 2. «Самообслуживание» лавкка. 3. «Продукты №1». 4. «Визит». 5. «Елена». 6. Муркаш пасарĕ.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Чăх(тукмаксăр пуçне),кг | 95 | 95 | 94 | 95 | 85 |
| Шăнтнă пулă, кг | 62 | 65 | 65 | 65 | 65 |
| Услам çу, кг | – | – | 156 | – | 195 |
| Тип çу, кг | 67 | 67 | 61 | 70 | 75 |
| Сĕт, çу шайĕ 3,2 проц., кг | 29 | 29 | 30 | 31,5 | – |
| Çăмарта, шт | 3,6 | 3,6 | 3,5 | 3,5 | 3,5 |
| Сахăр песукĕ, кг | 43 | 43 | 43 | 43 | 40 |
| Тăвар, кг | 7,9 | 7,9 | 7,9 | 7,9 | 9 |
| Хура чей, кг | 250 | 260 | 240 | 280 | 250 |
| Тулă çăнăхĕ, кг | 16,5 | 16,5 | 16,0 | 17,5 | 18 |
| Рис, кг | 38 | 38 | 36 | 38 | 35 |
| Вир кĕрпи, кг | 42 | 42 | – | 44 | 43 |
| Хура тулă кĕрпи, кг | 90 | – | – | 90 | 90 |
| Вермишель, кг | 28 | 27 | 27 | 28 | 28 |
| Çĕр улми, кг | 35 | 35 | 36 | – | 35 |
| Шурă пуçлă купăста, кг | 30 | – | 30 | – | 30 |
| Пуçлă сухан, кг | 33 | 33 | 30 | 33 | 32 |
| Пан улми, кг | 59 | 59 | 54 | 58 | 55 |

**Çырăнтару**

**Хаклă вулаканăм!**

**Райхаçата иккĕмĕш çур çултан илсе тăма çырăнтарас тапхăр малалла пырать. Çырăнтару хакĕ унчченхиех – 191 тенкĕ те 70 пус (ултă уйăха).**

**Çĕр ĕçченĕн пурнăçĕнчен**

## Хуçалăхри ĕç-хĕлпе паллашрĕç

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи йывăр лару-тăрăва пĕлсе тăрас тата ăна каялла çавăрмалла мар тĕле çитиччен аталанма парас мар тесе райадминистрацин ял хуçалăх пайĕ хуçалăхсен ĕçĕсене пăхсах тăрать. Вăхăтра сăмахпа е ырă сĕнӳпе пулăшнин пахалăхĕ те пысăккине ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем аван ăнланаççĕ.

Пĕтĕмĕшле ĕç-хĕлпе паллашма йĕркеленĕ ял хуçалăх пайĕн баланс комиссийĕ пуш уйăхĕн 23-мĕшĕнче Е. Андреев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн ĕçне тишкерсе хак пачĕ. Пĕтĕмĕшле хак савăнмаллах мар пулсан та 30 çул каялла Социализмла Ĕç Геройĕ Евтихий Андреевич Андреев ертсе пынă хуçалăхăн малалла аталанма çулсем пур-ха. Фермăсенче, ĕç коллективĕсенче пулнă хыççăн ку хуçалăхăн производство кăтартăвĕсене ӳстерме шанчăк пурри курăнчĕ. Çакна валли çĕнĕ технологисене алла илсе ĕç йĕркелĕвне улăштармалла кăна.

Хальлĕхе вара хуçалăх 7-8 çул тăкаклă ĕçлесе пырать. Фермăра ĕне сăвакан çитмест. Ферма заведующийĕ çук. Ĕне пуçне паян талăкра 7 килограмм сĕт суни районта чи пĕчĕк кăтарту. Çулталăкра сыснасем вăтамран 0,6 хут çеç çăварлани те самай шухăшлаттарать. Микроклимат тивĕçтерменрен нумай çура вилет.

– Ял хуçалăх пайĕ çеç мар хуçалăхра хăйĕнче те çитменлĕхсене шырани лайăх. Сирĕн ĕнесемпе сыснасен генетика пуласлăхĕ пысăк. Унпа туллин усă курма ĕçе планласа, çĕнĕлĕхсене пурнăçа кĕртсе вăй хумалла. Пĕрпĕрне шанса тачă çыхăнура ĕçлесен малашлăх пулатех. Анчах хальлĕхе хуçалăхра кашни специалист малашлăха пăхни сисĕнмест, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин тĕп врачĕ Н. Яковлев.

Баланс комиссине хутшăннисем хуçалăхăн паянах çитес çур аки планĕсемпе çанă тавăрса ĕçлемелли çинче те тулли калаçу ирттерчĕç. «Умри ĕçсенче выльăх апачĕллĕх культурăсем акса хăварасси тĕп вырăнта пулмалла. Апат пулсан продукци пулать», – палăртрĕç вĕсем.

Хуçалăх ертӳçи В. Семенов райадминистрацин ял хуçалăх пайĕн специалисчĕсене усăллă та вырăнлă сĕнӳсемшĕн тав турĕ, вĕсене шута илесси пирки шантарчĕ.

**А. БЕЛОВ.**

**Йыхрав**

## Аслă пĕлӳ илме

ЧР Шалти ĕçсен министерстви аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕме йыхравлать. Çавна май районти шалти ĕçсен пайĕ Чул хулари академие (следователь, уголовнăй розыск оперуполномоченнăйĕ специальноçсем), Санкт-Петербургри университета (экономика преступленийĕсене хирĕç кĕрешес ĕç валли бухгалтери учечĕ, анализ, аудит специальноçĕ) кĕме абитуриентсене хатĕрлесси пирки пĕлтерет. Пермьри тата Новосибирскри çар институчĕсем валли те абитуриентсем хатĕрлет. Аслă пĕлӳ илме 17 – 25 çулхи Раççей гражданĕсене чĕнеççĕ. Тĕплĕнрех районти шалти ĕçсен пайне 62-9-60 номерпе шăнкăравласа пĕлме пулать.

**А. НИКОЛАЕВ.**

**Саламлатпăр!**



Пирĕн юратнă çыннăмăра – мăшăра, аннене, хунямана, кукамая, тăвана – Исетеркке ялĕнче пурăнакан, ĕç ĕмĕрне тăван хуçалăхра ирттернĕ **Валентина Ивановна ИЛЛАРИОНОВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе чунтан тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр, малашне те сана пурнăçра Турри вăйхăват парсах тăтăр. Мĕн ĕмĕтленни-шутлани пурнăça кĕрсех пытăр ялан, хуйхă-суйхă ан пытăр çывăхна нихăçан. Анлă кĕрекӳ тăван кил-йыша хапăл тутăр куллен. Тавтапуç сана пурнăçăн анлă çулĕ çине тĕрĕс-тĕкел тăратма пултарнишĕн, ялан пулăшса пынишĕн.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Юратнă аннене, кăмăллă асаннене – Калмăк ялĕнче пурăнакан **Валентина Федоровна ВОРОНИНĂНА** 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.

Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Пире нумай çул савăнтарса пурăнма Турри сывлăх патăр сана. Эпир сана юрататпăр.

**Саламлаканĕсем: икĕ ывăлĕ, кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, 7 мăнукĕ, 3 кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем, пускилсем.**



Хаклă мăшăрăма, юратнă аннемĕре тата хунямана, çепĕç чунлă асаннене, ытарайми кукамая – Тушкасси ялĕнче пурăнакан **Аврора Васильевна ИВАНОВĂНА** 80 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсĕ пурри пирĕншĕн питĕ пысăк телей. Тавах сана ырă кăмăлушăн, чун ăшшине пире парнеленĕшĕн. Эпир сана юрататпăр, эсĕ пурришĕн савăнатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе пуян пултăр. Ачусен, мăнуксен хаваслă сассине илтсе, ырлăхне курса савăнмалла пултăрччĕ.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсемпе кĕçĕн мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.**



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене – Йӳçкасси ялĕнче пурăнакан **Викентий Петрович ПЕТРОВА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Мартăн 22-мĕшĕнче вăл 80 çул тултарчĕ. Яланах сывлăхлă, хавас кăмăл-туйăмлă пулмалла пултăр, малашне татах та нумай-нумай çул пире савăнтарса пурăнмалла пултăр. Хăвăн ватлăх çулĕсене пăхмасăрах пире халĕ те май пур таран пулăшатăн. Пуриншĕн те сана çĕре çити пуç тайса тав сăмахĕ калатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, юратнă тăванĕсем.**

# Штраф та уголовнăй наказаниех

Судра

2002 çулта Раççей Федерацийĕн Президенчĕ хайĕн РФ Федераллă Пухăвне янă Çырăвĕнче пĕрремĕш хут уголовнăй законодательствăна тата наказанисене пурăçлассине гуманизацилессин задачине лартрĕ. Çавна май Раççей Федерацийĕн уголовлăй тата уголовлă-процессуаллă кодексĕсене чылай тӳрлетӳ кĕртнĕ. Вĕсем асăрханусăр пулнипе тунă, кунпа пĕрлех пĕчĕк тата пысăк мар йывăрăшлă, налук преступленийĕсемпе çыхăннă. Альтернативлă майпа наказани парассин мелĕсене вара ӳстернĕ. Çынна ирĕкрен хăтарасси выранне штраф парасси, обязательнăй е юсав ĕçĕсене явăçтарасси вырăн илет.

Судсем çынсене ирĕкрен хăтарассипе çыхăнман наказанисем парассине ытларах практикăлама тытăнчĕç. Вĕсен шутĕнче штрафсем, обязательнăй тата тӳрленӳ ĕçĕсем.

Уголовнăй штрафа суд приговорĕпе палăртаççĕ. Унăн чи пĕчĕк виçи хальхи вăхăта 2 пин те 500 тенкĕпе, чи пысăк виçи пĕр миллион тенкĕпе танлашать.

Акă 2010 çулта Муркаш районĕн 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи пĕчĕк тата пысăк мар йывăрăшлă преступленисем тунăшăн 21 çынна наказани шучĕпе штраф тӳлемелле тунă. Штраф виçине палăртнă чухне суд тунă преступлени йывăрăшне, айăпланаканăн тата унăн çемье членĕсен пурлăх тĕлĕшĕнчи лару-тăрăвне, айăпланакан ĕç укçи е ытти тĕрлĕ тупăш илме пултарассине шута илет.

Миравай судьян 2011 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнчи приговорĕпе Я. гражданина РФ Уголовнăй кодексĕн 139-мĕш статйин 1-мĕш пайĕпе урăх çын çуртйĕрне ирĕксĕр кĕнĕшĕн айăплана пулнă. Я. гражданинăн унччен те вăхăчĕ тухман айăплав пулнă. Апла пулин те суд айăпланакан хăй айăпне йышăннине, пурăнакан вырăнтан панă лайăх характеристикăна, яланхи ĕç вырăнĕ пулнине шута илсе ăна 9 пин тенкĕ штраф пама йышăннă.

Тепĕр ыйту вăл – айăпланниcем панă штрафсене хăйсен ирĕкĕпе тӳлесе татманни. 2010 çулта Муркаш районĕн 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи пĕтĕмпе 87300 тенкĕ штраф шыраса илме наказанисем панă пулнă. Хăйсен ирĕкĕпе айăплисем çав суммăран 36800 тенкине кăна тӳленĕ. РФ уголовнăй исполнительнăй кодексĕпе килĕшӳллĕн вара айăпли штрафа суд приговорĕ вăя кĕнĕренпе 30 кун хушшинче тӳлесе татма тивĕç. Штрафа вăхăтра тӳлессинчен пăрăнакансем тĕлĕшпе суд пысăкрах наказанисем палăртма пултарать. Акă В. гражданина çаратнăшăн Муркаш районĕн 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйин 2010 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе 5000 тенкĕ тӳлемелле йышăну тунă пулнă. Вăл штрафа вăхăтра тӳлемен. Çапла вара ăна суд хăйĕн 2011 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе штраф вырăнне 140 сехет обязательнăй майпа ĕçлеттермелле йышăну тунă.

**Е. НИКИТИНА,**
**Муркаш районĕн 2-мĕш номерлĕ суд участокĕн миравай судйи.**

# Кун йĕркинче

## Хваттер тавра ыйту нумай

***Çак кунсенче Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра ЧР Прокуратури, пĕтĕм Раççейри «Раççей юрисчĕсен ассоциацийĕ» обществăлла организацин Чăваш регион уйрăмĕ, Муркаш район прокуратури «ЖКХ сферинче право ыйтăвĕсене йĕркелесси» ыйтупа граждансене йышăнчĕç.***

Калаçу уйрăм граждансене, вăрçă ветеранĕсене çурт-йĕрпе тивĕçтерес, нумай хваттерлĕ çуртсене пăхса тăрас тата ытти хăш-пĕр ыйту тавра пулчĕ. Йышăнăва район прокурорĕн пулăшуçи А.Н.Тихонов ертсе пычĕ. Мероприятие капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн специалисчĕсем, «Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» МУП директорĕ Н.В.Любимов тата ытти специалистсем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, граждансем хутшăнчĕç.

Çакăн йышши хăшпĕр ыйтусене пăхса тухрĕç. Вĕсем çине Н.В.Любимов хуравларĕ.

**– Парковая урамри 2-мĕш çурта МСО турĕ, 5 çуллăх гаранти пачĕ. Эпир çакăнта пурăнма пуçланăранпа вăхăт нумаях иртмерĕ пулин те ертсе пыракан компани пирĕнтен юсав укçи ыйтма пуçларĕ. Мĕншĕн пирĕнтен укçа пуçтараççĕ?**

– Пурăнмалли çуртйĕр кодексĕпе килĕшӳллĕн 2010 çулхи декабрь уйăхĕнче кунта пурăнакансен пухăвĕ пулчĕ. Унта малашне кунти ĕç-хĕле кам ертсе пырас ыйтăва пăхса тухрĕç. Пухăвăн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн малашнехи ĕçе «Пурăнмалли çуртйĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компание» шанса пачĕç. Эпир ку укçана хамăр пуçарулăхпа тата хамăр валли пуçтармастпăр. Ăна пухасси депутатсен районти Пухăвĕн йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн пулса пырать. Ятарлă йĕркепе килĕшӳллĕн çурт-йĕре пăхса тăмалла. Пурне те гаранти шутне кĕртеймĕн вĕт. Паллă ĕнтĕ, кирек епле çурт-йĕре те техобслуживани (аварисене сиресси, çурт-йĕре çурхи тата çуллахи, кĕрхи тата хĕллехи тапхăрсенче эксплуатацилесси, вăхăтран вăхăта ирттерекен тĕрĕслев, ытти ĕçсем) тумалла, пĕтĕмĕшле хăт кĕртмелле (çурт тавра йĕрке тăвасси), авари юсавĕ те вăхăтран вăхăта туса тăмалла. Кил картине хăш чухне çӳп-çап пырса пăрахакансем те тупăнаççĕ, ăна та пуçтармалла вĕт. Çаксем валли усă курма тивет пухнă укçатенкĕпе.

**– Çӳп-çап турттарса тухнăшăн тăватакал метртан шутлаççĕ. Пысăкрах калăпăшлă хваттерте пĕр çын пурăнать, пĕчĕкреххинче вара çиччĕн. Ытларах çын хыççăн тасамарлăхĕ те нумайрах вĕт?**

– Пурăнмалли çуртйĕр кодексĕн норма акчĕсемпе килĕшӳллĕн çӳпçап утилизацилессине тăватакал метртан тӳлемелле. Çын шучĕпе шутланă пулсан та ытти кăлтăк тупăннă пулĕччĕ.

**– Хваттерти подъездсенче мĕн вăхăтран куллен хи тата капиталлă юсав ĕçĕсене ирттермелле?**

– Юсав ĕçĕсем тӳрремĕнех укçа-тенкĕ ыйтăвĕпе çыхăннă. Хваттер укçине вăхăтра тӳлесен юсав ĕçне те ирттерме пулать, анчах та парăм калăпăшĕ паянхи кун тĕлне 3 миллион ытла. Хваттер укçине вăхăтра тӳлеменни пĕтĕм ĕçе ура хурать. Çак укçа-тенкĕрен хваттерсене ăшăпа, çутăпа, шывпа тивĕçтерессине йĕркелеме тата унта вăй хуракансене ĕç укçи тӳлемелле. Çавăнпа ку ĕç те укçа-тенкĕ шайлашнипе пулса пырать.

**Р. МАКАРОВА.**

# «Паянхи пурнăçа эпĕ хурламастăп»

Шăпа



Мартăн 12-мĕшĕнче Муркаш салинче пурăнакан Николай Гаврилович Алексеев хăйĕн 85 çулхи юбилейне паллă турĕ. Çавна май хисеплĕ вăрçă ветеранĕ чылай çын саламĕпе ăшă сăмахне тивĕçрĕ. Ĕмĕр тăршшĕнче сахал мар хура-шур курнă, вăрçă тертнушине тӳссе ирттернĕ асатте хăй пурнăçĕ пирки каласа пама килĕшрĕ.

– Ĕмĕр сакки сарлака, теççĕ халăхра. Ун тăршшĕнче вара пирĕн вăхăтрисен темĕн те тӳсме тиврĕ. Пулнăши пирĕн вăхăтрисен ачалăх? Тен эпир ăна туйса, курса юлаймарăмăр? Тĕрĕссипе вара манăн вăл вăхăта аса та илес килмест. Выçăллă-тутăллă чупса çӳреттĕмĕр, атте-анне ĕçрен таврăнасса питĕ кĕтеттĕмĕр. Вĕсем çимелли илсе килессе шанаттăмăр. Ăшă тумтир тăхăнасси, тăраниччен çиесси, пĕлӳ илесси пысăк ĕмĕт пулнă.

Николай Гаврилович çемьере виççĕмĕш ача пулнă. Пурнăçĕ йывăр пулнă пулин те вăл ултă класс вĕренме пултарнă. 13 çула пуснă ачана нуша вăрман касма Шупашкар хулинчен çирĕм çухрăм аякка илсе кайнă. Ĕçлекен çыннăн ытларах çиес килет. Сăкăр туянасси вара чĕр нуша пулнă. Ăна илес тесе ĕçлесе ĕшеннĕскерĕн çур çĕр варринче лавкка умне черете кайса тăма тивнĕ. Çапах та чăтнă, ăнакăна пăхмасăр ĕçленĕ.

– Атте пирĕнтен ирех уйрălса кайрĕ. Пĕтĕм йывăрлăх анне хул пуççийĕ çине тиенчĕ, хăш чухне вара вăл çак пысăк çухатушăн татăлсах йĕретчĕ. Эпир ăна май пур таран пăлхантарма, унпа чуна усса калаçма, ĕçлесе пулăшма тăрăшаттăмăр, – тет Николай Гаврилович.

Ашшĕ çĕре кĕнĕ хыççăн виçĕ çул иртсен, 1943-мĕш çулта, ăна çара илсе кайнă. Унччен вара вăл икĕ çул хушши тăван хуçалăхра тимĕрçĕ лаççинче ĕçленĕ. Вăрçă нуши ăна Инçет Хĕвел тухăçне илсе çитернĕ.

– Паянхи пекех астăватăп çав вăхăтсене. Вĕççĕр-хĕрсĕр тупă кĕрĕслетнĕ, танксем кĕрленĕ сасăсем хăлхара янăраççĕ. Юнпа пĕвеннĕ тус-юлташсем вĕççĕр-хĕрсĕр тăшман пульли алхасакан хирте выртса юлчĕç, ĕмĕрлĕхех тăван çĕртен аякра вĕт вĕсем. Çĕнтерӳ кунне вара эпĕ Маньчжури тăрăхĕнче кĕтсе илтĕм, çав куна кĕтсе илни сăмахпа каласа ăнлантарайми савăнăç пулчĕ. Чылайăшĕн кусĕнчен савăнăç куççулĕ тухрĕ, – терĕ иртнĕ вăхăта аса илсе çамрăк шуралнă çӳçне шăлнă май.

Хăрушă вăрçă вĕçленнĕ хыççăн Николай Гавриловича ытти яшсемпе Çурçĕр Корейăна ăсатаççĕ. Кунта унăн салтак пăтти çиесси малалла тăсăлать. Тăван яла 1950 çулта таврăнать, ăна кил вучахне упракан амăшĕ кĕтсе илет. Хăйĕн малашнехи пурнăçне йĕркелеме шутланă яш Крыма ĕçлеме каять, унта шофер пулса тăрăшать. Ют тăрăхра каменщик ĕçне те алла илет. Çапах та тăван кĕтес унăн асĕнчен тухмасть. 1958-мĕш çулта Николай Гаврилович çемье çавăрать. Мăшăрĕпе иккĕшĕ тăватă ача çуратса ура çине тăратаççĕ. Аякра алла илнĕ специальноçсем вара ăна ĕмĕр тăршшĕпех вырăнлă пулаççĕ. Унăн ĕç çулĕсене тишкерсен вара ăна чăн-чăн ĕç геройĕ теме пулать.

– Эпĕ хамăн ĕмĕрте миçе çурт купаланине, кăмака тунине шутласа та кăлараймастăп. Çын ыйтăвне тивĕçтерес тесе ăçта кăна çитмерĕм пулĕ. Паянхи куна та эпĕ пачах хурламастăп. Пурăнас текен алă усса ĕç вырăнĕ кĕтсе лармасть, – терĕ ветеран, çулĕ нумай пулин те ахаль ларма килĕшменнине палăртса.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Аукцион

## Извещение о проведении аукциона

**на право заключения договоров купли-продажи земельных участков**

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики (далее - организатор аукциона) приглашает принять участие в аукционе, открытом по составу участников и по форме подачи предложений о цене, на право заключения договоров купли-продажи (далее - аукцион) земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

Основание: постановления администрации Моргаушского района Чувашской Республики «О проведении открытого аукциона на право заключения договоров купли-продажи земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района Чувашской Республики» от 22.03.2011 №229, «Об утверждении перечня земельных участков, расположенных на территории Моргаушского района, выставляемых на торги (аукцион, конкурс)» от 21.03.2011 № 227.

**Почтовый адрес, номер контактного телефона, адрес официального сайта организатора аукциона и комиссии по проведению конкурсов или аукционов:** 429530, с. Моргауши, ул. Мира, 6 телефон/факс (83541) 62-2-66, 62-5-99, e-mail: imu4@morgau.cap.ru, http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71

**Контактные лица**: Петров А.В., начальник отдела имущественных и земельных отношений, тел.: 62-2-66, Илугина Н.Б., ведущий специалист-эксперт отдела, тел.: 62-5-99

**Характеристика объектов купли-продажи**:

**Лот №1** - земельный участок с кадастровым номером **21:17:110101:172**, категории «земли сельскохозяйственного назначения», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:110101, общей площадью 4000.00 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеется

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 6840.00 (шесть тысяч восемьсот сорок) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №2** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:220301:125**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Ягаткино, общей площадью 4000.00 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 45300.00 (сорок пять тысяч триста) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №3** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:260201:140**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Соляной, общей площадью 1754.00 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 24220.00 (двадцать четыре тысячи двести двадцать) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №4** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:160303:23**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для индивидуального жилищного строительства», местоположение: Участок находится примерно в 30м по направлению на запад от ориентира жилое строение, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Моргаушское сельское поселение, с.Моргауши, ул. Ленина,д.22, общей площадью 640.00 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

Технические условия: имеется возможность подключения к сетям инженерной инфраструктуры. Плата за подключение объекта к сетям инженерно-технического обеспечения определяется по согласованию с организациями – поставщиками услуг.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 12934.00 (двенадцать тысяч девятьсот тридцать четыре) рубля.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №5** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:031001:1256**, категории «земли сельскохозяйственного назначения», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, восточная часть кадастрового квартала 21:17:031001, общей площадью 634 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 1500.00 (одна тысяча пятьсот) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №6** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:220301:126**, категории «земли населенных пунктов», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, д. Ягаткино, общей площадью 4000 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 45300.00 (сорок пять тысяч триста) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №7** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:110101:156**, категории «земли сельскохозяйственного назначения», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:110101, общей площадью 4000 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 7400.00 (семь тысяч четыреста) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №8** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:060201:169**, категории «земли сельскохозяйственного назначения», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:060201, общей площадью 4000 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 7760.00 (семь тысяч семьсот шестьдесят) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №9** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:110101:153**, категории «земли сельскохозяйственного назначения», разрешенный вид использования «для ведения личного подсобного хозяйства», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Тереси, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:110101, общей площадью 4000 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 7300.00 (семь тысяч триста) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Лот №10** – земельный участок с кадастровым номером **21:17:071701:350**, категории «земли сельскохозяйственного назначения», разрешенный вид использования «для огородничества», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, северная часть кадастрового квартала 21:17:071701, общей площадью 202 кв.м.

Ограничения (обременения) земельного участка не имеются.

**Начальная (стартовая аукционная) цена участка** – 440.00 (четыреста сорок) рублей.

**Сумма задатка** – 20% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

**Шаг аукциона** – 5% от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Информация о проведении аукциона:

Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

**1**. Заявка на участие в аукционе (в установленной форме) в 2-х экземплярах, с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки на участие в аукционе принимаются в кабинете № 313 по рабочим дням с 9.00 до 15.00 по адресу организатора аукциона со дня опубликования извещения о проведении аукциона в районной газете «Сентеру ялаве» и размещения его на официальном сайте органов местного самоуправления - Моргаушский район Чувашской Республики в сети Интернет в разделе «Объявления».

**2**. Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: Получатель платежа – Администрация Моргаушского района, ИНН 2112001366 КПП 211201001, лицевой счет 05123000012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района, р/счет: 40302810775140000005 в Чувашском ОСБ №8613 г. Чебоксары, кор/счет 30101810300000000609, БИК 049706609. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (адрес участка) и дату аукциона.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 5-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

**3.** Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц - для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей - для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность - для физических лиц.

**4.** Физическое лицо предъявляет документ, удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность (кроме участия в аукционе на право заключения договора купли-продажи земельного участка для индивидуального жилищного строительства).

**5.** Юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица, а также выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством государства, в котором зарегистрирован претендент) (кроме участия в аукционе на право заключения договора купли-продажи земельного участка для индивидуального жилищного строительства).

Заявителем предоставляется **опись документов** в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Срок окончания приема заявок на участие в аукционе – **26 апреля 2011 года, 17:00 часов.**

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

С документацией об аукционе, в том числе с формой заявки и проектом договора купли-продажи земельного участка можно ознакомиться по адресу: Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, каб. №313, а также на официальном сайте органов местного самоуправления - Моргаушский район Чувашской Республики в сети Интернет в разделе «Объявления».

Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договоров купли-продажи земельных участков может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку на участие в аукционе.

Рассмотрение заявок на участие в аукционе на предмет соответствия требованиям, установленным документацией об аукционе, состоится на заседании Комиссии **- 28 апреля 2011 г. в 10.00 часов по адресу организатора аукциона.**

Ознакомление с земельным участком на местности: в рабочее время по предварительному согласованию с представителем отдела имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену приобретения в собственность земельного участка.

По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора купли-продажи земельного участка.

Договор купли-продажи земельного участка заключается в срок не позднее 10 рабочих дней со дня подписания протокола.

Определение участников аукциона состоится **29 апреля 2011 года по месту нахождения организатора конкурса:** 429530, с. Моргауши, ул. Мира, дом 6, малый зал заседаний, 3 этаж. Время проведения открытого аукциона (по московскому времени): Лот №1- 8.40, Лот №2 – 9.00, Лот №3 – 9.20, Лот №4 – 9.40, Лот №5 – 10.00, Лот № 6- 10.20, Лот № 7 – 10.40, Лот № 8 – 11.00, Лот №9 – 11.20, Лот № 10- 11.40.

# Кил тата хушма хуҫалӑх



## Сӗт тути килӗшет

**Лавккара сутакан вӗретнӗ сӗт тути килӗшет. Килте хатӗрлес тесен ӑна мӗнле вӗретмелле?**

**И. ВИШНЕВСКАЯ.**

Тин вӗретнӗ сӗте вӗри шывпа чӳхесе илнӗ термоса ярӑр та хупласа лартӑр. 6-7 сехет иртсен сӗте хӗрлӗрех тӗс ҫапать. Унӑн тути те самай лайӑхланать.

## Ҫӗр улми вӑрлӑхӗ янтӑла

Агроном сӗнет

**Юр ҫума чарӑнмасть пулсан та ҫуркунне кунсерен ытларах вӑй илет. Кӗҫех ҫур аки те ҫитӗ. Паян мана ҫӗр улми вӑрлӑхӗ янтӑлассипе шухӑшлаттарать. Ӑна паянах суйламалла-и? Нӳхрепе хунӑ вӑрлӑхпа мӗнле пулмалла?**

**А. РЕМИЗОВА.**

Катькас ял тӑрӑхӗ.

**Пӗлтӗрхи шӑрӑх ҫу кунӗсем паян ял ҫынни умне ҫур акирен чылай маларах ҫӗр улми вӑрлӑхӗ хатӗрлес ыйтӑва кӑларни хаҫат редакцине килекен ытти ҫырусенчен те курӑнать. Ҫакна шута илсе эпир район администрацийӗн ял хуҫалӑх пайӗн тӗп агрономӗпе А. ПАВЛОВПА ҫыхӑнтӑмӑр. Унӑн хуравӗ ҫапла пулчӗ:**

– Ҫӗр улми упранакан хранилищӗре е нӳхрепре сывлӑш температури 3–4 градусран ӑшӑрах пулмалла мар. Управри ҫӗр улмин уҫҫӑнах ҫӗрме пуҫланӑ лаптӑкӗсем пулмасан ӑна паян тӗкӗнмелле те мар. Ахальлӗн вӑл шӑтма пуҫлать, ҫӗрет, унӑн энергийӗ пӗтет.

Ҫӗрнӗ вырӑнсене суйланипе пӗрлех кил хуҫисен ҫӗр улми упранакан хранилищӗсем патӗнчен тата вӗсен ҫийӗнчен юра уҫмалла. Маччаран шыв тумлакан вырӑнсене савӑтсем лартмалла. Яровизацие кӑларасси – ҫӗр-шыв типнӗ май тепӗр уйӑхран пурнӑҫламалли ӗҫ.

Вӑрлӑх тенӗрен. Пирӗн тӑрӑхра юлашки ҫулсенче «удача», «невский», «рокко», «романа», «Петербургский», «чайка» тата ытти сортсем лайӑхха палӑрчӗҫ.

Паян сутлӑх вӑрлӑх кама пур-ха? Килти хушма хуҫалӑха аталантаракансем ҫӗр улми вӑрлӑхне ҫӗр-шыв типнӗ май «ДаАн» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑран («рокко», «удача»), Ятманти А. Максимов хресчен (фермер) хуҫалӑхӗнчен («удача», «журавинка», «Ильинский»), «ВаСем» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑран («редскарлет», «удача» т. ыт. те) туянма пултараҫҫӗ.

Пахчаҫӑ сӗнӗвӗсем

## Аманнӑ йывӑҫа сиплетпӗр

Йывӑҫ вуллипе турачӗсен хуппи сиенленнине садра час-часах курма пулать. Вӑл тӗрлӗ сӑлтавран килме пултарать: ҫӗрӗшнипе, хӗвел пӗҫертнипе, сивӗ леккипе, хурт-кӑпшанкӑпа чир-чӗр сиенленипе. Юр хулӑн пулсан тата вӑл майӗпен ирӗлсен те йывӑҫ хуппи ҫӗрӗшме пултарать. Ҫакӑ пуринчен ытла ҫуркунне пуҫламӑшӗнче сывлӑш температури хӑвӑрт улшӑнса тӑнипе пулать. Кӑнтӑрлахи вӑхӑтра кӑнтӑр тата кӑнтӑр хӗвел анӑҫ енчи йывӑҫ хуппи ӑшӑнать, сӗткен куҫни палӑрма пуҫлать, хуппӑн тепӗр енче ҫакӑ палӑрмасть. Ҫӗрлехи вӑхӑтра самай сивӗ тӑрать. Температура ҫакӑн пек улшӑнса тӑни йывӑҫ хуппин пайӗсене таткалать. Ҫапла вара вулӑ тӑрӑх тата пысӑк туратсен тӗпӗнче ҫуркаланчӑксем пулаҫҫӗ, унтан хупӑ сӗвӗнет. Йывӑҫ вуллин кӑнтӑр хӗвел анӑҫ тата ҫур ҫӗр енчи температура уйрӑмлӑхӗ 12–15 градуса ҫитет. Ҫакӑн пек улшӑну йывӑҫа сиен кӳрет.

Ҫакӑн пек сиенленнӗ йывӑҫа сиплеме тӑрӑшмалла. Чи малтанах типнӗ хупӑна чӗрӗ вырӑн тӗлне ҫитиччен сивӗч ҫӗҫӗпе касса илмелле. Унтан сурана тимӗр купоросӗпе дезинфекцилемелле (пӗр витре шыв ҫине 300 грамм чухлӗ илмелле). Йывӑҫа ятарлӑ варпа е ӗне тислӗкӗпе хутӑштарнӑ тӑм сӗрмелле, уҫӑ суран типесрен тата типӗ тӑм тӑкӑнасран пусмапа ҫыхса лартмалла. Сиенленнӗ йывӑҫа, сипленисӗр пуҫне, шӗвӗ удобренипе апатлантармалла тата тӑпрана типсе каймалла памалла мар.

**А. ШАРИКОВ пахчаҫӑ.**

Патшалӑх пулӑшӑвӗ

## Ӑратлӑ выльӑх вӑрлӑхӗшӗн

***Хаҫатӑн иртнӗ номерӗнче ӗнесене киле пырсах пӗтӗлентерни пирки тата ҫак ҫула суйлакансем 70 процент патшалӑх пулӑшӑвӗпе усӑ курма пултарни пирки ҫырнӑччӗ. Питӗ лайӑх, анчах ҫак пулӑшу пурнӑҫланӑ ӗҫшӗн е?..***

**Москакассинче пурӑнакансем.**

***Ыйту ҫине Чӑваш Республикин ял хуҫалӑх министерствин финанспа кредит политикин пайӗн Муркаш районӗнче ӗҫлекен тӗп специалист-экспречӗ О. МАКАРОВА хуравлать:***

– Хаҫат вулакансем ҫӗнӗлӗхсемпе паллашсах тӑни савӑнтарать. Чӑнах та иртнӗ кунсенче районти выльӑх чирӗсемпе кӗрешекен станци йӗркеленипе ятарлӑ специалист киле тухсах ӗнесене пӗтӗлентерессе ҫул илчӗ. Кунта хаҫат вулакансене пӗчӗк ӑнлантару туса парас тетӗп. 70 процент пулӑшу вӑл ӑратлӑ выльӑх вӑрлӑхӗшӗн ҫеҫ. Ӗнене пӗрре пӗтӗлентерме 2 доза вӑрлӑхпа усӑ кураҫҫӗ пулсан пӗр дозин хакӗ 105 тенкӗ. Ҫапла вара икӗ доза 210 тенкӗ тӑрать. Унӑн 70 проценчӗ – 147 тенкӗ. Ҫав укҫана сире перекет кӗнеки ҫине куҫарса парӗҫ.

Пӗлме интереслӗ

## Баклажан

**Пасарта эпӗ баклажан ҫимӗҫӗ сутнине курнӑ-ха, анчах та ун пирки нимех те пӗлместӗп. Пирӗн патра ӳсет-ши вӑл тата ӑна калча тумалла е тӳрех ана ҫине лартмалла?**

**Н.СЕМЕНОВА.**

Баклажан лартма хӗвел ӳкекен вырӑна суйласа илмелле. Палӑртнӑ вырӑнти тӑпра кӑпка та тутлӑхлӑ япаласемпе пуян пултӑр. Ана ҫине ҫителӗклӗ таран ҫӗрнӗ тислӗк е торф тӑкса хӑвармалла. Ҫавӑн пекех ӳснӗ вӑхӑтра ӑна шӑварсах тӑмалла. Типӗ тӑпра ҫинче вӑл начар ҫитӗнет, ҫимӗҫ те вӗтӗ пулать.

Баклажана калча ҫитӗнтерсе лартмалла. Унӑн вӑррине март уйӑхӗн вӗҫӗнче акса хӑвармалла. Апрель уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче калчана торфпа тӑпра хутӑшӗ тултарнӑ чӳлмеке куҫармалла та парника вырнаҫтармалла. Июнь уйӑхӗн пуҫламӑшӗнче вара ана ҫине кӑларса лартмалла.

Баклажан ҫутта юратакан пахча ҫимӗҫ. Ҫавӑнпа ӑна сайрарах лартма тӑрӑшмалла. Йӗрпе йӗр хушшине 40 – 60 сантиметр, калчапа калча хушшине 40 сантиметр хӑвармалла. Калчана шӑтӑк чавса лартмалла. Ӑна тӑпрапа хупласа хурас умӗн шӑвармалла. Тӑпрари нӳрӗке упрас хӑварас тесе тислӗк е торф сапмалла.

Баклажан калчи сивӗне начар тӳссе ирттерет. Ҫавӑнпа та анана полиэтилен пленкипе витсе хумалла. Икӗ эрне иртнӗ хыҫҫӑн минераллӑ имҫама шывра ирӗлтерсе калчана апатлантармалла. Ӳснӗҫемӗн туни ҫумне тӑпра купаласа пымалла. Лайӑх ҫитӗннӗ баклажанӑн ҫимӗҫӗ чылай пысӑк пулать. Ӑна вӑхӑтра пуҫтарса тӑмалла. Ватӑларах кайнин туни начарланать.

Баклажана колорадо нӑрри тапанать. Ӑна вӑхӑтра пӗтерме тӑрӑшмалла. Унсӑрӑн ҫулҫине пӗтӗмпех ҫисе ярма пултарать. Ун пек авӑр ҫинче ҫимӗҫ те ҫитӗнмест.

Баклажанран хатӗрленӗ апат-ҫимӗҫ ҫын организмӗшӗн ҫав тери усӑллӑ. Унри тӗрлӗ йышши тутлӑхлӑ япала юнри холестерин хисепне пӗчӗклетет. Баклажанран хатӗрленӗ вӑлча ҫав тери тутлӑ тата тӗрлӗ витаминпа пуян.

**С.ВИКТОРОВ.**

Мӑн Сӗнтӗр сали.

Ӗҫрен ан хӑра – вӑл хӑй санран хӑратӑр

## «Выльӑх усраса пӳрт лартрӑмӑр»

***Кашмашра пурӑнакан Алевтина Ивановнӑпа Валерий Германович Александровсем ӗҫсӗр пурӑнайманнине ачаранах курса-пӗлсе тӑратӑп. Тӑван ял ҫыннисенчен те, Чӑваш енре пурӑнакансенчен те ӗҫе юратнисӗр пуҫне нимӗне те уйӑрса тӑмаҫҫӗ вӗсем. Иртнӗ кунсенче ӗҫ хастарӗсем патӗнче хӑнара пултӑм, вӗсен килти хушма хуҫалӑх опычӗпе паллашрӑм.***



Валера пиччепе Аля инке ҫинчен ялта ырӑпа кӑна калаҫаҫҫӗ. Ял ҫыннине пулӑшма тӑрӑшнипе, «Свобода» хуҫалӑх аталанӑвне пысӑк тӳпе хывнипе, хутшӑнура шанчӑклӑ пулнипе тата хушнӑ ӗҫрен никӑҫан та пӑрӑнманнипе паларҫҫӗ вӗсем. Акӑ эпӗ пырса кӗнӗ чухне те кил хуҫи урамра хайсен тӗлӗнчи шырланта ӳстернӗ вӑрманти хуралтӑ патне иртме ҫул уҫатчӗ. Унӑн мӑшӑрӗ вара ӗне сума тухрӗ **(сӑн ӳкерчӗкре)**.

– Ҫуркунне ҫитрӗ те юрпа кӗрешесси тӗп вырӑнта. Ахальлӗн юр шывӗпе юхса каясси, упранакан пурлӑха йӗпетсе ярасси инҫе мар, – терӗ утма ҫул ҫинчи юра уҫса тухнӑ кил хуҫи киле иртме сӗнсе.

Икӗ хутлӑ кирпӗч ҫурт урамранах хайӗн хӑчӗпе илӗртет. Валера пиччепе кил хушшине кӗрсен те хулӑн юр пуснӑ ҫӗрте тирпейлӗх хуҫаланни куҫ айккинче юлмарӗ. Кашни япалан хайӗн вырӑнӗ. Сарай умӗнче ӗне валли тунӑ кормушкӑра ешӗл утӑ. Кунта ӗне апатланать.

– Икӗ ӗнене харӑсах витере апатлантарма кансӗртерех. Ҫавӑнпа ӑшӑ ҫанталӑкра пӗрне кил хушшине кӑларатпӑр, – терӗ ӗне сума ларнӑ май Аля инке.



Харӑсах сумалли икӗ ӗне тытма ҫӑмӑл мар. Анчах ҫак йывӑрлӑх Александровсемшӗн хӑнӑхнӑ пулӑм. Ҫу кунӗсенче вӗсем ҫулленех икӗ ӗне касӑва хӑваласа тухнине ял ҫыннисем хӑнӑхнӑ ӗнтӗ. Икӗ ӗнен паян икӗ пӑру. Сарай тулли чӑх-чӗп.

– Икӗ ӗне тытма апачӗ те самай кирлӗ-ҫке. Епле ҫаврӑнкаласа тухатӑр? – интересленетӗп кил хуҫинчен.

– Ялта пурӑнакан килти хушма хуҫалӑхсӑр пурӑнаймасть. Эпир те аттеанне пекех ҫӗр ӗҫӗнчен катара тӑмастпӑр. Иртерех вӑранакан тутӑ пулать тесҫӗ те эпир те паян тумалли ӗҫе ырана хӑвармастпӑр. Ҫапла вара кашни ӗҫӗн хӑйӗн вӑхӑчӗ. Ҫуллакӗркунне хӗл валли утӑ-улӑм янтӑлатпӑр, хӗлле вара продукци илетпӗр. «Свобода» хуҫалӑхра хам 1976 ҫултанпа водительте ӗҫлетӗп, мӑшӑрӑм хуҫалӑхра 1978 ҫултанпах бухгалтер. Ҫакӑнти ӗҫ укҫи ҫумне килти хушма хуҫалӑхри 45 сотка ҫӗр ҫинче туса илнӗ продукципе выльӑх-чӗрлӗх тытса тунӑ укҫа-тенкӗне хушса пурӑнатпӑр. Килти хушма хуҫалӑх ял ҫыннишӗн тӗкӗ пулнине хамӑр ӗҫрен куратпӑр, – каласа парать сӑмах ҫӑмхине сӳтнӗ май Валера пичче **(сӑн ӳкерчӗкре)**.

Ӗҫ юратӑвӗ вӑл ӑруран ӑрӑва куҫать ҫав. Кашмашрах ҫуралса ӳснӗ Валерӑн та, Ҫӗрпӳ район хӗрӗн Альӑн та ашшӗ-амӑшӗсем килти хушма хуҫалӑха тӗреклӗ тытнӑ. Инкен асӗнчен акӑ ашшӗ-амӑшӗ яланах 2-шер ӗне тытни, амӑшӗ фермӑра ӗҫленине пӑхмасӑрах килти хушма хуҫалӑхра выльӑх тытасси ҫине те алӑ сулманни асран каймасть. Кун ҫумне аслашшӗ ҫӑпата, ашшӗ килте йышлӑ усранӑ сурӑх ҫӑмӗнчен кӑҫатӑ йӑваласа сутни, хуҫалӑхра чӑх-чӗп йышлӑ пулни хӗр ачана та ҫамрӑклах килти хушма хуҫалӑха юратма хӑнӑхтарнӑ.

Пулӑҫ пулӑҫа инҫетрен курать. Ӗҫе юратса ҫитӗннӗ каччӑпа хӗр паллашса 1979 ҫулта ҫемье ҫавӑраҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтран вӗсен хӑйсен килти хушма хуҫалӑхӗ. Унта вӗсем тӑтӑшах икӗ ӗне тытнипе пӗрлех ҫулла 6 сысна, кӗркунне 4 сысна усрани, 20 пуҫран кая мар хур тытни, чӑх-чӗпсемпе пӗрлех кӑвакалсем те йышлӑ пулни Кашмашра пурӑнакансемшӗн вӑрттӑнлӑх мар. «Мӗнле ӗлкӗреҫҫӗ анчах», – теҫҫӗ ӗҫченлӗхӗсенчен тӗлӗнсе ял ҫыннисем.

Ӑмсанма пулать, анчах ун хыҫӗнче мӗн чухлӗ ӗҫ... 40 ҫула яхӑн водительте вӑй хуракан Валера пичче талӑкра Шупашкара 2–3 рейс туни те пӗрре мар пулнӑ. Талӑкра 3–4 сехет ҫывӑрнипех ял ҫыннисем е колхоз валли Атӑл урлӑ вутӑ е йывӑҫ патне ҫул ҫӳрени те асран тухмасть. Ҫакӑ йӑлтах килти хушма хуҫалӑх аталанӑвне, хӗр тата 2 ывӑл ҫуратса ӳстернине ҫаврӑннӑ.

Хӑйсен килӗ тӗлӗнчи пӗчӗк шырлана «ура хурса» пӗчӗк вӑрман ҫӗклесе яла илем кӳнине те вӗсем килти хушма хуҫалӑх аталанӑвӗ тесе йышӑнаҫҫӗ.

– Хурӑн калчисене Йӑлӑмран кӳрсе килни асра. Ӗҫрен юлса хамӑр тӑрӑхри вӑрмана кайса вӑхӑт иртерес килмен ӗнтӗ, – тет В. Александров ӗҫпе кушӑрханӑ аллисемпе чей чашӑкне алла илнӗ май. – Малтанхи вӑхӑтсенче сысна усраттӑмӑр та ӑна сутса тунӑ укҫапа кирпӗч, шифер, хӑма-пӑта туянаттӑмӑр. Ҫапла вара килти хушма хуҫалӑха аталантарсах пурӑнмалли ҫурт турӑмӑр, хушма хуралтӑсем ҫавӑртӑмӑр. Ачасене виҫҫӗшне те Чӑваш патшалӑх университетӗнчен вӗрентсе кӑларассинче те килти хушма хуҫалӑх пулӑшӑвӗсӗр пулмарӗ.

Валерий Германович вунӑ ҫул каялла 2 сысна сутса Т-16 трактор илни те килти хушма хуҫалӑхпах ҫыхӑннӑ. «Мӑшӑрӑм аш сутса тимӗр-тӑмӑр туянчӗ тесе тарӑхнӑччӗ малтан, анчах вӑхӑт иртнӗҫемӗн юрӑхсӑр трактор ӗҫлекен пулчӗ те паян те унӑн пулӑшӑвне куратпӑр», – кӑмӑллӑн пӑхса илчӗ Валера пичче ҫине Аля инке.

Ӗҫрен хӑраман В. Александров 55 ҫул хушшинче тӗрлӗ шайри Хисеп хучӗсемсӗр пуҫне «11-мӗш пилӗк ҫуллӑх ударникӗ» паллӑна та, 1986 ҫулта ВДНХ пӑхӑр медальне те, аварисӗр ӗҫленӗшӗн алла ҫыхмалли сехете те тивӗҫнӗ.

Ӑнӑҫусем пур. Вӗсем нумай. Анчах кашнин хыҫӗнчех Валерӑпа Альӑн тата вӗсен ывӑлӗсемпе хӗрӗн килти хушма хуҫалӑхри ӗҫ юратӑвӗ, ӑна хисеплени малта тӑрать.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сӑн ӳкерчӗкӗсем.**

# «Пособи темшĕн пĕр шайрах юлать?..»

Ыйту – хурав

**«Хисеплĕ редакци!**

**Чун ыратнипе алла ручка илсе çыру çырма шутларăм. Пĕр ыйту канăç памасть, чĕрене ыраттарать. Пурнăç йывăрланса пынă май çамрăк çемьесене те йывăр. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен пур тавар та хаклансах пырать.**

**Пенси укçи те хăпарать, çулталăкне виçĕ хутчен те. Ачасемшĕн паракан пособи вара темшĕн пĕр шайрах юлать. Ачасем кирлĕ мар пек пулса тухать, пенсионерсене кăна усрасшăн. Ăнланатпăр вĕсем уншăн пайтах нуша курнине. Çапах та ачасем çинчен те манмалла мар пек туйăнать. Ачасем пирĕн пуласлăх тетпĕр-çке.**

**Хăш-пĕр çемьесенче пенси илсе тăракан пулсан та газпа çутăшăн укçа тӳлесе курмаççĕ. Хамăрах, çамрăксем, сĕт сутса сĕт укçинчен тӳлетпĕр. Лайăх хăть сĕтне пуçтараççĕ.**

**Паллах, йывăр, çăмăл мар çамрăксене. Мана кăна мар пуль, ачаллă пур çемьене те пăшăрхантарать пуль çак ыйту: ачасемшĕн паракан пособи калăпăшне ӳстерменни. Халĕ, сăмахран, çак пособипе мĕн илме пулать? Урана тăхăнмалли те, çи-пуç та йӳнĕ мар.**

**Ыйтăва хуравласса шанатăп.**

**Çыраканĕ С. ПЕТРОВА».**

Çакăн пек çыру килчĕ редакцине.

**Ача амăшне хумхантаракан ыйту çинеЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин Муркаш районĕнчи социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçи Н.П. ПЕТРОВА çапла хурав пачĕ:**

– Малтанах акă мĕн каласа хăварасшăн. Ача пособийĕсен калăпăшĕ те çулсеренех ӳссе пырать. Сăмахран, вăл 2010 çулта июлĕн 1-мĕшĕнче ӳсрĕ.

Саккун тăрăх ача 18 çул тултариччен уншăн уйăхсерен паракан пособие ашшĕ-амăшĕ тивĕçет. Çак пособи калăпăшĕ мĕнле пуласси виçĕ самантпа çыхăннă: ача миçе çулта пулнипе, çемьере миçе ача пулнипе тата ашшĕ-амăшĕн тупăшĕпе. Кунсăр пуçне пĕччен амăшĕн, çар çыннисен, тулли мар çемьесенче ӳсекен ачасемшĕн паракан пособисен калăпăшĕ те тĕрлĕрен.

Тĕслĕхрен, Чăваш Республикин 2004 çулхи 46 № «Ачаллă граждансен пособийĕсем çинчен» саккунĕпе килĕшӳллĕн икĕ ачаллă çемьере икĕ çултан иртмен ача пособийĕ уйăхсерен 758 тенкĕпе танлашать, икĕ çултан иртнин пособи калăпăшĕ 164 тенкĕ. Виçĕ ачаллă çемьере вара икĕ çула çитмен ачашăн кашни уйăхра 843 тенкĕ пособи илсе тăраççĕ, 2–7 çулхишĕн – 249 тенкĕ, 7–18 çулхишĕн – 331 тенкĕ.

Пособие çемьери тупăш пĕр çын пуçне пурăнмалли чи пĕчĕк виçе калăпăшĕн 150 процентĕ чухлĕ пулмасан шутласа параççĕ. Пĕр çын пуçне тивекен тупăш 150 процентран ытла пулсан çемьери икĕ çула çитмен ачашăн çеç пособи тӳлеççĕ.

Çав вăхăтрах çемьере виçĕ е ытларах ача пулсан пĕр çын пуçне тивекен тупăш пурăнмалли чи пĕчĕк виçе калăпăшĕн 150 процентĕнчен иртсен те кашни ачашăнах пособи шутласа параççĕ.

Пурăнмалли чи пĕчĕк виçе калăпăшĕ паянхи кун 5007 тенкĕпе танлашать. Çак виçене регион шайĕнче кашни кварталта пăхса тухаççĕ. Çавăнпа та вăл кварталсерен улшăнма пултарать. Ача пособийĕн калăпăшне те регион шайĕнче йышăнаççĕ.

Пирĕн почта

## Çырусене тишкеретпĕр

Редакцине кунсеренех тĕрлĕ çыру килет. Авторсене пирĕнпе çыхăну тытса ял тăрăхĕсенче пулса иртекен мероприятисем çинчен пĕлтерсе тăнăшăн тав сăмахĕ калатпăр. Шел пулин те хаçат страницисенче пур çырăва та туллин пичетлеме май килмест. Çавăнпа та çырусемпе кĕскен паллаштаратпăр.

**Москакассинчи Культура çурчĕн директорĕ Г. Голубева** пирĕн пата Çĕр-шыв хӳтĕлевçин кунне тата Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунне ял тăрăхĕнче спорт мероприятийĕ ирттерсе паллă тунине пĕлтерчĕ. Ял тăрăхĕнчи çамрăксен ертӳçи А. Рыжков пуçаруллă пулнине ырăпа асăнать автор. Москакассинче уявсене арçынсем те, хĕрарăмсем те активлă хутшăннă.

**Шетмĕпуçĕнчи ял библиотекине ертсе пыракан В. Никитина** вара çырура хăйсен ял тăрăхĕнче хĕл ăсатăвĕ хаваслă иртнине пĕлтерчĕ. Капăрлатнă çунасемпе ярăнас текенсем те, юрă-ташă ăстисем те уява йышлăн пухăннă. Хĕл ăсатăвĕн программипе пăхса хунă спорт ăмăртăвĕсем интереслĕ иртнĕ. Уява улăм кĕлеткене ырласа-ташласа çунтарнипе вĕçленĕ.

**Юнкă ял тăрăхĕнчи** хĕл ăсатăвĕ пирки те редакцине çырса пĕлтерекен пулчĕ. **Н. Шандимирова** хĕл ăсатăвĕнчи хаваслă конкурссенче ачасем пĕр-пĕринпе ăмăртнине пăхма ваттисем те нумаййăн пуçтараннине пĕлтерет. И. Илугина, А. Иштудова, А. Илугина шăрантарнă авалхи çăварни юррисем пурин кăмăлне те хăпартнă. Ку тăрăхри композиторсем çырнă юрăсене М. Красновăпа А. Яргунькина юрласа уява пухăннисене хавас кăмăл парнеленĕ. Çăварни уявĕ спорт ăмăртăвĕсемсĕр иртмен: пĕччен, çемьепе, ушкăнпа ăмăртмаллисем те пулнă. Çăварни йăлипе кашниех çуллă икерчĕ астивнĕ.

Редакцине пĕлтереççĕ

## Служба тĕрĕслевĕ ирттернĕ, фактсем çирĕпленмен

Редакцие К. Захарова, З. Иванова, Т. Сидорова авторсенчен килнĕ çырăва районти шалти ĕçсен пайне тĕрĕслеме ярса панăччĕ. Шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е. И. Плечов ятарлă служба тĕрĕслевĕ ирттернине, çырура кăтартнă фактсем çирĕпленменнине пĕлтерчĕ.

Çитĕнӳ

## Фестивальтен – дипломпа

Малашлăха пăхакан тата хăй ĕçне чунĕпе парăннă специалист тĕрлĕ конкурссемпе фестивальсенчен тăрса юлманни каламасăрах паллă. Ĕç ĕмĕрне Турайри вăтам шкулта ирттерекен, ачасене математика предметне вĕрентекен Зинаида Петровна Григорьева та ачасене вĕрентессинче хăйĕн ответлăхĕ пысăккине туять. Çавăнпа та çĕнĕлĕхсене алла илессине те вăл хăйĕн малтанхи тивĕçĕ тесе йышăнать.

Пуш уйăхĕн 2–5-мĕшĕсенче Тăвай районĕнче физикăпа математика вĕрентекенсен республикăри 22 фестивалĕ иртрĕ. Тĕрлĕ районсенчен пынă вуншар ăмăртуçă ретĕнче Турайри вăтам шкулти математика вĕрентекен З. Григорьева та пулма тивĕçрĕ. Тивĕçрĕ те киле çĕнтерӳпе таврăнчĕ. «Вĕренекене творчествăлла ĕçлеме хавхалантарасси» номинацире вăл фестиваль дипломне алла илнĕ.

Асăннă çитĕнӳ патне пыма Зинаида Петровна 10-мĕш классемпе презентациллĕ «Математикăллă кафе» уçă урок ирттернĕ. «Лайăх пĕлӳ аппетитпа вĕренсен çеç асра юлать», – тет фестиваль лауреачĕ.

Çакнашкал вĕрентекен пирĕн коллективра пурришĕн эпир питĕ хĕпĕртетпĕр. Ăна вара татах пысăкрах ӳсĕмсем сĕнетпĕр.

**Таня ГОРЯЧЕВА.**

ГИБДД асăрхаттарать

## Тимлĕхе ан çухатăр

Шкулта вĕренекенсен виççĕмĕш чĕрĕк вĕçленчĕ. Умра – каникул. Апла пулсан ачасем пушă вăхăт нумай пулнипе урамра та ытларах пулаççĕ. Вĕсен хăрушсăрлăхне мала хунăран мартăн 21–31-мĕшĕсенче «Тимлĕ пулăр – каникул!» ятпа профилактика мероприятийĕсем ирттереççĕ. Çуран çӳрекенсемпе водительсем çул-йĕр правилисене, шкул ачисене турттаракан автобуссем тухса çӳренĕ чухне ятарлă йĕркене пăхăннине ГИБДД сотрудникĕсем уйрăмах тимлĕ тĕрĕслеççĕ.

Кăçалхи январь–февраль уйăхĕсенче кăна ачасем хутшăннипе республикăра 25 инкек пулнă. Вăл шутра пирĕн район территорийĕнче – пĕрре. Унта ача пассажир суранланчĕ. Ачасен сывлăхĕпе пурнăçĕ хăрушсăрлăхра пултăр тесе çул-йĕр çинче ачасен хăйсен те асăрханмалла, ашшĕ-амăшĕсемпе педагогсен те хăрушсăрлăх пирки тăтăшах калаçусем ирттерме манмалла мар.

**С. ИВАНОВ, ГИБДД инспекторĕ.**

**Постановление главы администрации**
**Кадикасинского сельского поселения**
**№ 29 от 23 марта 2011 года**

**О проведении публичных слушаний по проекту решения муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со ст. 28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района ЧР **ПОСТАНОВЛЯЮ:**

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 15 апреля 2011 года в 10 часов 00 минут в здании администрации Кадикасинского сельского поселения по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Кораккасы, ул. Новая, дом 1.

2. Настоящее постановление подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».

**Проект муниципального правового акта**
**Об изменении разрешенного использования земельного участка**

Руководствуясь п.10 ст.3 Федерального закона от 25 октября 2001 года №137-ФЗ «О введении в действие Земельного кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю:

Изменить разрешенное использование земельного участка с кадастровым номером 21:17:300101:152, из категории «земли населенного пункта», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Кораккасы, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:300101 разрешенное использование для «строительства магазина» площадью 619 кв. м. на «для ведения личного подсобного хозяйства».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 15.04.2011 года до 9-00 часов.

**Мы, собственники земельных долей Филиппов Валерий Иванович, Филиппова Дина Ильинична объявляем о выделении земельного участка в счет земельной доли общей площадью каждый по 13100 кв.м., расположенных на территории землепользования бывшего СХПК «Дружба» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярабайкасинского сельского поселения, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:121301.**

**Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Ярабайкасинского сельского поселения.**

**Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории бывшего СХПК «Дружба» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ выделяемой в счет земельной доли, расположенной по адресу: ЧР, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, в западной части кадастрового квартала 21:17:121301.**

**Заказчики работ, собственники в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Филиппов Валерий Иванович, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Милюдакасы. Паспорт серии 9701 № 282957 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 19.09.2001 г.; гр. Филиппова Дина Ильинична, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Милюдакасы. Паспорт серии 9702 № 848658 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 24.04.2003 г.**

**Согласование местоположения границ состоится 26.04.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».**

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок. Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778. Песок, ОПГС (гравмасса), щебень. Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами. 9-50.**

**Прогноз погоды с 26 марта по 1 апреля 2011 года** www.yandex.ru

| сб 26 | вс 27 | пн 28 | вт 29 | ср 30 | чт 31 | пт 1 апреля |
|---|---|---|---|---|---|---|
| облачно | облачно | облачно | облачно | облачно | облачно, временами снег | облачно |
| –5 | -6 | -3 | -2 | -1 | -1 | -2 |
| –11 | -11 | -6 | -2 | -4 | -8 | -6 |

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы,грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады).
Питание, проживание предоставляются.
Вахта. З/п от 20000 руб. (сдельная).
Тел.: 8(8352)23-22-22. 3-4.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Уважаемые граждане!**
**Центр правовой помощи окажет вам все виды юридических услуг качественно и недорого в короткие сроки. Поможем вам взыскать с банков комиссионные сборы за выдачу кредита и обслуживание ссудного счета: проценты, компенсацию за моральный вред и судебные расходы. Тел.: 8-927-669-96-13.**

**Продаем сено, солому в тюках, с доставкой. Тел.: 8-960-307-41-78. 5-5.**

**Комбикорма, отруби, ячмень. Доставка от 1 т. Тел.: 89279920519. 3-5.**

* * *

**Проекты домов, электро- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс». с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03. 4-5.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 4-9.**

* * *

**Куплю старый дом в любой деревне, до 50 тыс. рублей. Тел.: 38-75-44. 3-3.**

* * *

**ЗАО «МСО Моргаушская» уведомляет о повышении стоимости кв. м. жилья с 30 марта 2011 года. По всем вопросам обращаться по тел.: 69-7-23; 63-1-19.**

* * *

**Ĕне, вăкăр, тынашки, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-342-39-43. 3-5.**

* * *

**Бурение скважин на воду, установка, монтаж, доставка колец диаметром 1 м. Тел.: 8-903-066-76-49; 8-906-385-44-75. 2-5.**

* * *

**Женщина с ребенком снимет жилье в с. Моргауши. Тел.: 8-961-341-40-79.**

* * *

**Куплю старый дом с земельным участком до 70 тыс. руб. Тел.: 8-987-577-66-41. 2-2.**

* * *

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». 6700 руб. - 94 канала. 6500 руб. - отдельно ресивер. Гарантия. Тел.: 8-906-385-29-30.**

* * *

**Продаются овцы романовской породы, свинина беконная. Цена договорная. Тел.: 89373841041; 89196632409. 1-5.**

* * *

**Халăхран хаклă хакпа ĕне, вăкăр, тына ашăн е чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 89196719626. 6-10.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 4-5.**

* * *

**В д. Юнгапоси на территории МСО «Моргаушская» открылся магазин«СЕЛЬХОЗЗАПЧАСТИ». Тел.: 89603048267. 4-9.**

* * *

**ТЦ «Лотос» продает: трубы для ограды, профнастил, сетку- «рабицу», профили, мет. двери и ворота, банные печи, мотоблоки, косилки. Изготовление, доставка, установка. Тел.: 8-9176652726. 3-5.**

**Продается сено в тюках, в неограниченном количестве, с доставкой. Сено местное, непривозное, высокого качества.**
**Тел.: 8-906-384-48-30. Сергей. Тел.: 8-927-990-39-08. Вася. 5-5.**

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». Установка, гарантия. 6800 руб. Тел.: 8-905-345-77-19. 2-7.**



3-5.

**Кредитному потребительскому кооперативу требуется кредитный специалист для работы в отделении в с. Моргауши. Требования – высшее экономическое образование, опыт работы по специальности, возраст до 40 лет, знание экономики района и его жителей, знание бухучета, коммуникабельность, ответственность, уверенный пользователь ПК (Word, Excel, Internet). Резюме отправлять по адресу: sodrugestvo21@mail.ru. Возьмем в аренду офисное помещение в центре с.Моргауши площадью до 20 кв.м. Контактный телефон 8-952-029-38-69. 2-6.**

* * *

**Администрация Моргаушского района информирует о предстоящем предоставлении земельных участков в аренду ОАО «ВымпелКом» из земель населенных пунктов с кадастровыми номерами 21:17:070505:161, 21:17:070505:167, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район,д. Шомиково, участки расположены в центральной части кадастрового квартала 21:17:070505 для размещения КТП и линии электропередач.**

* * *

**Участник долевой собственности Белов Виталий Аркадьевич, 17.11.1963 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Комсомольская, д. 33, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, сельское поселение Сятракасинское, территория землепользования СХПК им. К. Иванова, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:230701 площадью 1,08 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.**

**Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:**

**1. Администрации Сятракасинского сельского поселения.**

**2. Белову Виталию Аркадьевичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Шупоси, ул. Комсомольская, д. 33.**

Моргаушское районное собрание депутатов и администрация Могаушского района выражают глубокое соболезнование Басяеву Владимиру Михайловичу, врачу общей практики Нискасинского отделения общей врачебной практики МУЗ «Моргаушская ЦРБ», депутату районного Собрания депутатов пятого созыва по поводу кончины отца

**БАСЯЕВА**
**Михаила Степановича.**

Коллектив МУЗ «Моргаушская ЦРБ» выражает глубокое соболезнование врачу общей практики Нискасинского ООВП Басяеву В.М. в связи с невосполнимой утратой – кончиной

**ОТЦА.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.**
**ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.**

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

**АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăна пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Белов А.П.**
**Пичете панă 25.03.2011 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4329.**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.